28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
31
ШАМАТКУН
153(6390) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 29-мĕшĕнче ОРЕЛ енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ.

БЕЛГОРОД енче тата ДОНБАСРА разведчиксем кĕрешнĕ.

ЛЕНИНГРАД фронтĕнче разведчиксем вăйлăн çапăçнă тата икĕ енĕ те артиллерирен хирĕ-хирĕç вăйлăн персе тăнă.

Июлĕн 28-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 38 танкне персе çĕмĕрнĕ тата пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 63 самолетне ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçĕртерехре совет войскисем тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе малалла куçнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Нимĕçсен командованийĕ ку участока малтанхи пекех ытти фронтсенчен тата резервран войскăсем куçарать. Уйрăмăнах Францирен тата Германирен маршевăй батальонсем çитни палăрнă. Пĕр кавалери чаçĕнчи боецсем хăвăрттăн атакăласа нимĕçсене вăйлăн çирĕплетнĕ виçĕ пунктран хĕссе кăларнă, тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 виллине çити выртса юлнă. Çавăн пекех тăшман хĕçпăшал нумай пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра нимĕçсен пехота полкĕ, 30 танк пулăшса пынипе, пирĕн чаçсене икĕ хутчен атакăлама хăтланнă. Хаяр çапăçура нимĕçсен 10 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Орелран хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем нимĕç пехотин темиçе хаяр контратакине сирсе янă, тăшмана çынсем енĕпе йышăр çухатусем кӳнĕ.

Орелран кăнтăртарахра пĕр соединенин чаçĕсем малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Юханшыв рубежĕ хӳттинче тăшман хаяррăн хирĕç тăнă. Совет боецĕсем çав юханшыв урлă каçса кайнă та нимĕçсен тĕрекленнĕ пунктне йышăнса илнĕ. Çав участокри çапăçусенче 400 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 16 складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем наступлени çапăçусенче 1500 салтакпа офицере çити пĕтерсе тăкнă, 8 танк çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă, 42 автомашинăна, артиллерин 5 батарейне тата миномечĕсен 8 батарейне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белгород енче разведчиксен ушкăнĕсем активлăн кĕрешнĕ. Гвардин старши лейтенанчĕн Прохоровăн подразделенийĕ [illegible]

[illegible]

Кăнтăрта, Донбасра, разведчиксем çапăçнă. Красноармеец Комолов юлташ [illegible] Тепĕр участокра нимĕç автоматчикĕсен ротине пĕр чарсăр [illegible] флангран пырса çапма хăтланнă. Пулеметчик Аграмов юлташ тĕл персе 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ытти автоматчикĕсем тарса çухалнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери тата минометсен подразделенийĕсем тăшманăн оборона сооруженийĕсене тата сывăхри тылĕсене персе тăнă, 36 дзота ишĕлтернĕ, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă. Совет летчикĕсем тăшманăн чугунçулпа пыракан 5 эшелонне çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 самолетне персе ӳкернĕ. Советсен икĕ штурмовикне тăшманăн икĕ истребителĕ атакăланă. Колышев тата Гоголев стрелоксем «Фокке-Вульф—190» ятлă пĕр истребительне персе ӳкернĕ, тепĕр истребителĕ çапăçуран тухса тарнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче Криворотов старши лейтенантăн подразделенийĕ, артиллери хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн тĕрекленнĕ пункчĕ патне çывăхах пырса çитнĕ. Вара артиллери нимĕçсен оборонин шалти тылĕсене пеме тытăннă. Çав самантра пирĕн боецсем тăшманăн траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Штыкпа çапăçнă чухне тăшманăн 100 салтакне ытла пĕтерсе тăкнă. Радиостанци, 7 пулемет тата винтовкăсем, автоматсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

* * *

Украинăра кĕрешекен партизансен отрячĕсем июлĕн 25-мĕшĕнче нимĕçсен 30 эшелонне [illegible]

[illegible]

Нимĕçсен 216-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи [illegible] Гельмут М. çапла каланă: «Çак кунсенче Германирен [illegible]

[illegible]

Йăлтах фронт валли

СЕНТЕР, июлĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). [illegible]

[illegible] фронтри пек çĕнĕ обязательствăсем илнĕ.

Колхозниксем митинг хыççăнах Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе пуçарнă. Кĕске вăхăтрах 11 тир, 6 килограмм çăм, 8 метр пир тата ытти япаласем пухнă.

Çавăн пекех Оринино ялсоветĕнчи «Красное Сормово», «Новый путь», Пушкăрт ялсоветĕнчи тата Юнга ялсоветĕнчи колхозсенче те сулăм при- [illegible] Мария Морозова нормăна 150 процент тултарнă. Çавнашкалах Мария Акрамовская та нормăна 125—130 процент тултарса пынă.

Шкул ачисем те çулăм [illegible] тыра вырма çĕрте примерлă ĕçленипе ответлеççĕ. Кашмашри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем уйхир ĕçĕсене уйрăмах активлăн хутшăнаççĕ.

6-мĕш класра вĕренекен пионер А. Замятин кăçал 125 ĕçкунĕ тунă.

Сулăм приказĕ тылри хĕрӳ ĕçпе фронтовиксене вăйлăн пулăшса тăма хавхалантарчĕ.

М. КАРПОВ.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе пĕр промышленность Халăх Комиссариачĕ 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Якупин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод аллинче хăварма йышăннă.

Трактористсемпе комбайнерсем! Тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухăр!

Чкаловски облаçри тырпулсене комбайнпа пухса кĕртес ĕçĕн малта пыракан мастерĕсемпе трактористсем Совет Союзĕнчи мĕнпур комбайнерсемпе трактористсене чĕнсе калани

Хаклă юлташсем!

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç наступлени тунă хыпара эпир, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, пысăк савăнăçпа тата хавхаланупа кĕтсе илтĕмĕр.

Тăван совет çĕршывĕшĕн çапăçнă çĕрте хăйсен юнĕсемпе пурнăçĕсене шеллемен фронтовиксен — хамăрăн ывăлĕсен геройла паттăр ĕçĕсем пире, тылра ĕçлекенсене пурне те, ылханлă тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкмашкăн тата тăшмана тăван çĕршывран хăваласа кăлармашкăн Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе пулăшма чĕнеççĕ.

Урал çывăхĕнчи хирсем фронтран инçе. Анчах инçетри тылра та эпир кашниех боец — ылханлă вăрă-хурахсене хирĕç пыракан историллĕ аслă çапăçăвăн участникĕ пулма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен пирĕн фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ. Хамăрăн воинсене тырпул, ашкакай, пахча-çимĕç тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене çителĕклĕ таранах парса тăрас тивĕçлĕх пирĕн çине ӳкет, фронта вĕсем те боеприпассем пекех кирлĕ.

Кăçалхи çуркунне пирĕн МТС-сем — Погроминск, Люксембургски, Вильямс ячĕпе тăракан, Бузулукски тата ытти МТС-сем те — колхозсене çуракине хăвăрт ирттерме пулăшрĕç. Çĕрĕн кашни татăкне тăрăшса тата юратса ĕçлесе акса хăварнă. Колхозниксем калчасене сумкурăкĕсенчен тасатнă.

Сталин юлташ çапла каланă: «Уборка — пĕр вăхăтра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма юратмасть: вăхăтра пухса кĕртрĕн — туянтăн, уборкăра кая юлтăн — çухатрăн».

Уборкăра уйрăмах комбайн пысăк вырăн йышăнса тăрать. «Комбайнăн пĕлтерĕшĕ çакăнта: вăл тырпулсене вăхăтра пухса кĕртме пулăшать.. Унăн пĕлтерĕшĕ тата çакăнта пулать— вăл пысăк çухатусем тăвассинчен пире хăтарать». (СТАЛИН).

Комбайн халиччен те нимĕнпе улăштарма çук машина пулнă пулсан, вăрçă кунĕсенче вăл тата ытларах кирлĕрех пулса тăчĕ. Тырпулсене ытти майсемпе пухса кĕртме çĕршер çын кирлĕ пулсан, комбайн вара ăна хăех тума пултарать. Вăл вуншар лашана тата вăкăрсене ĕçрен хăтарать.

Çак хĕрӳллĕ те ответлă тапхăрта колхозниксемпе государство пирĕн çине пысăк шанчăк хураççĕ. Пирĕнтен — комбайнерсемпе трактористсенчен тата эпир комбайнсемпе тракторсене туллин те тухăçлăн ĕçлеттерме пĕлнинчен тырпулăн тухăçлăхĕ килет. Эпир комбайнпа лайăх тата хăвăрт ĕçлени тăшмана пырса çапнипех пулать.

Хăватлă техника ĕçе пĕлекен мастерсен аллинче тĕлĕнмелле ĕçсем тăвать. Пирĕн чи лайăх комбайнерсем иртнĕ çул мухтава тивĕç ĕçлерĕç. Комбайнпа тырă пухса кĕртес ĕçĕн мастерĕ И. П. Варакин (Большевистски МТС-ран) «Сталинец» ятлă икĕ комбайна кăкарса ĕçлесе 3467 гектар вырса пуçтарчĕ, 4.654 килограмм горючи перекетлерĕ. Комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ И. С. Кошевой (Соль-Илецки МТС-ран) икĕ «Сталинец» кăкарса ĕçлесе 3.000 гектар вырса пуçтарнă тата 2.300 килограмм нефтепродуктсем перекетлесе хăварнă. Пĕртăван Васильев комбайнерсен агрегачĕ («Третий решающий год пятилетки» МТС-ран) 3.205 гектар вырса пуçтарнă, 2.000 килограмм шĕвĕ топливо перекетленĕ.

Эпир уборкăна вăхăтра тата тĕплĕн хатĕрленес, машинăсене лайăх хатĕрлес, штурвальнăйсене, горючи, шыв тата тырă турттаракансене; улăма пухса купаласа пыракан работниксене малтанах уйăрса лартас, колхозсенче комбайнсене пулăшса тăма лашасем уйăрса хурас, комбайнсем валли чи лайăх тракторсене тата чи опытлă трактористсене суйласа илес задачăна лартрăмăр.

Эпир çакăн пек тĕллев лартрăмăр: комбайна пĕр метр та ытлашши çӳретмелле мар, сăлтавсăр пĕр минута та чарса тăратмалла мар. Колхозсен председателĕсемпе, механиксемпе тата агрономсемпе пĕрле эпир комбайнăн кашни агрегатне куçарса çӳретмелли татăклă график турăмăр. Хире тухса каяс умĕн комбайн агрегачĕсен начальникĕсем çынсене мĕнле ĕçлемелли çинчен ăнлантарса пачĕç. Комбайнерсем вырма тухиччен хăйсене уйăрса панă лаптăксене тĕпчесе вĕренчĕç. Комбайнсем çумне тырра комбайн ĕçленĕ чухнех пушатмалли хатĕрсем туса лайăхлатарнă.

Чăн-чăн çарти пек çирĕп ĕç дисциплинисĕр уборкăра хăвăрт та тухăçлăн ĕçлеме çук. Комбайн агрегачĕн начальникĕн распоряженийĕ — боевой приказ, çав приказа пурнăçламасăр тăма никам та пултараймасть. Нормăна тултараймарăн — хиртен ан кай, çакă пуриншĕн те правило пулмалла.

Уборкăра тăккаланчăксем пулмалла мар — эпир çакăншăн тăрăшатпăр. Мĕнпур комбайнсен зерноуловительсем пур. Выраса май пур таранах аялтан выратпăр. Комбайн хыççăн лашалла кĕреплесемпе тураса тухмалла, ун пек кĕреплесем çук колхозсенче—пучахсене колхозниксем алă вĕççĕн пуçтараççĕ.

Çапла ĕнтĕ, лозунг—пĕр чарăнса тăмасăр ĕçлесси, тырпулсене пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси!

Фронта шĕвĕ топливăн кашни килограмĕ питех те кирлине асра тытса, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе горючи сахалтарах пĕтерсех туса ирттерме мĕнпур мерăсене йышăнтăмăр: топливо хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке туса хутăмăр, нефтехранилищĕсем туса йĕркелерĕмĕр, горючи турттармалли урапасем тата ытти хăшпĕр япаласем те чылай турăмăр. Çапла вара горючи ытлашши расходлас мар тесе тăрăшатпăр.

Ĕçре чарăнса тăрассинчен тата машина çĕмĕрĕлессинчен кашни водитель хăй машинине, боец хăйĕн хĕçпăшалне сыхласа упранă пек, сыхласан çеç хăтăлма пулать. Эпир машинăсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăма график турăмăр, ăна çирĕппĕн пурнăçласа пыратпăр.

Кашни комбайнерпа тракторист хăйне валли запаслă пайсемпе инструментсем пухса хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне—куçса çӳрекен ремонтнăй мастерскойсем техникăллă пулăшу параççĕ, вĕсене механиксем ертсе пыраççĕ.

Сталин юлташ социализмлă ăмăрту çинчен кăтартса панине пурнăçа кĕртсе, ăмăртура пĕтĕмĕшлĕ çĕкленӳ туса, эпир çамрăк, ĕçре опытсăртарах юлташсене куллен пулăшатпăр. Эпир вĕсене ĕçĕн чи лайăх меслечĕсене вĕрентетпĕр, ĕçе хăвăртрах хăнăхма пулăшатпăр, вĕсем те нормăсене пурнăçласшăн тата ирттерсе пурнăçлассишĕн пирĕнпе ăмăртчăр.

Пирĕн задача пархатарлă та хисеплĕ. Фронтпа тăван çĕршыв умĕнчи ответлăх питех те пысăк.

Комбайнерсемпе тракторист юлташсем, эпир сире чĕнсе калатпăр: **1943 çулхи вăрçă вăхăтĕнчи тырпула пухса кĕртес ĕçе отлично туса ирттерессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухăр!**

Ăмăртăва хутшăнса, эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Пучахлă тырăсене 18—20 кун хушшинче пухса кĕртмелле.

2. Сезонра «Сталинец» ятлă кашни комбайнпа 700 гектартан кая мар, «Коммунар» комбайнпа — 500 гектартан кая мар вырса пуçтармалла. Комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ И. П. Варакин «Сталинец» ятлă икĕ комбайна кăкарса 3.500 гектар, комбайнерка П. С. Полякова — «Сталинец» ятлă икĕ комбайна кăкарса 3.600 гектар, пĕртăван Васильев комбайнерсем «Сталинец» ятлă икĕ комбайна кăкарса 3.500 гектар, комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ Е. С. Кириллов икĕ «Сталинеца» кăкарса 2.500 гектар, комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ А. А. Гладких икĕ «Сталинец» кăкарса 3.000 гектар вырса пуçтарма обязательство илнĕ.

3. Нефтепродуктсене нормăпа палăртнинчен 10 процентне перекетлемелле.

4. Машинăсене тирпейлĕн сыхласа усрамалла, сезон вĕçленсен вĕсене МТС картишне юсавлăн кайса лартмалла.

5. Кашни опытлă комбайнерăн иккĕ виç çамрăк комбайнера ĕçе вĕрентмелле.

Комбайнерсемпе комбайнеркăсем, трактористсемпе трактористка юлташсем! Пирĕн чĕнĕве йышăнса илĕр! Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту участникĕсен ретне тăрăр! Комбайнпа тырă вырса пуçтармалли плана тултарар тата ирттерсе тултарар, колхозсене тырпула хăвăрт та пĕр тăкаксăр пухса кĕртме пулăшар!

Ленинăн никам çĕнтерейми ялавĕ айĕнче, Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм совет халăхĕн аслă полководецĕ СТАЛИН юлташ ертсе пынипе—çĕнтерӳ патне малалла!

Александр Оськин—СССР Верховный Совечĕн депутачĕ, комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ; **Архип Оськин**—комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ; **И. Варакин** тата **С. Астионов**—Большевистски МТС-ăн комбайнерĕсем; **И. Кошевой**—Соль-Илецки МТС-ри комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ; **Ф. Веселый**—çав МТС-ри комбайнер; **С. Осадчий**—Пилюгински МТС-ри комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ, **Ф. Окунев**—çав МТС комбайнерĕ; **Ф. Кириллов**—Погромински МТС-ри комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ; **К. Лопин**—Кировски МТС-ăн комбайнерĕ; **А. Давыдов** тата **И. Инжеватов**—Бугурусланн МТС-ĕн комбайнерĕсем; **И. Якименко** — Буртински МТС-ăн комбайнерĕ; **А. Бессонов, И. Бушаев, В. Васильев, Е. Ширяева** — Краснохолмски МТС-ăн комбайнерĕсем, **А. Зиновьева** — çав МТС трактористки: **П. Дородников** — Чесноковски МТС-ăн комбайнерĕ; **А. Войтенко** — çав МТС трактористчĕ; **М. Никифорова, И. Бочарова, С. Сечельникова** — Лобазински МТС-ри комбайнерсем, **А. Выставочкина**—çав МТС-ри комбайнер, **П. Клюшкин, М. Далматов**—Ромашкински МТС-ри комбайнерсем, **И. Мишакин**—çав МТС трактористчĕ, **Н. Прутковский** — Кинделински МТС-ăн комбайнерĕ, **Г. Старовой**—Адамовски МТС-ăн комбайнерĕ, **И. Пономарев, М. Чердынцев**—Сакмарски МТС-ри комбайнерсем, **А. Назина**—çав МТС трактористки. **Н. Полякова**—Линевски МТС-ăн комбайнерки, **А. Рожков**—Буранная МТС-ĕн комбайнерĕ, **А. Трофимов**—Черно-Острожски МТС-ăн комбайнерĕ, **Ф. Головков**—Платовски МТС-ăн комбайнерĕ, **П. Дьяконов, А. Рабочих**—Каликински МТС-ăн комбайнерĕсем, **М. Сергунова**—Дзержинский ячĕпе тăракан МТС-ăн комбайнерки, **В. Корсунов**—Чапаевски МТС-ăн комбайнерĕ, **М. Голендяева**—Озерновски МТС-ăн комбайнерки, **К. Сидоренко**—Нежински МТС-ăн комбайнерĕ, **П. Крицкий** — Оренбургски МТС-ăн комбайнерĕ, **А. Богданов, А. Мороз**—Урало-Илецки МТС-ăн комбайнерĕсем, **А. Турбабин**—Кардаиловски МТС-ăн комбайнерĕ, **Ф. Кузьмин**—Чебеньковски МТС-ăн трактористчĕ, **З. Одиноченко** —Гавриловски МТС-ăн трактористчĕ.

Комбайнерсемпе трактористсен 1943 çулхи тырпула пухса кĕнĕ вăхăтри Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсем

Чкаловски облаçĕнчи тырпула комбайнпа вырса пуçтарас ĕçĕн мастерĕсемпе малта пыракан трактористсем çĕршыври мĕнпур комбайнерсемпе трактористсене—1943 çулхи тырпула отлично пухса кĕртессишĕн, комбайнсемпе тата тракторсемпе колхоз хирĕсенче тухăçлăн усă курассишĕн, нефтепродуктсене перекетлессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕнсе каларĕç.

Чкаловски облаçĕнчи тырпула комбайнпа вырса пуçтарас ĕçĕн мастерĕсен пуçарăвне ырласа, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ комбайнерсемпе трактористсен 1943 çулхи тырпула пухса кĕнĕ вăхăтри социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене пĕлтерет:

Ăмăртура мала тухнă тесе çак ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ комбайнерсем, штурвальнăйсем тата трактористсем шутланаççĕ:

1. Сезонра комбайнпа тума палăртнă ĕç нормисене пĕтĕмпех тата ирттерсе тултарсан.

2. Тырпула пысăк пахалăхпа, тăккаламасăр пухса кĕртсен.

3. Нефтепродуктсене комбайнпа тата тракторпа ĕçлесе пĕр гектар çинче расходлама палăртнă нормăран 10 процент чухлĕ перекетлесе хăварсан.

4. Машинăсене пĕтĕмĕшпех юсавлă тытса усрасан тата вĕсене уборка сезонĕ вĕçленнĕ хыççăн МТС килкартине юсавлă илсе пырса парсан.

5. Икĕ-виçĕ çамрăк комбайнера ĕçлеме вĕрентсен.

Сезонри нормăна ирттерсе тултарнă тата вăтамран кашни талăкрах: 15 футлă комбайнпа 8 гектартан кая мар, 20 футлă комбайнпа 9 гектартан кая мар, сурçĕрти комбайнпа 3,5 гектартан кая мар ĕçленĕ агрегатăн комбайнерне, штурвальнăйне тата трактористчĕсене «Социализмлă ялхуçалăхĕн отличникĕ» значокпа наградăлаççĕ.

* * *

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ мĕнпур комбайнерсемпе комбайнеркăсене, мĕнпур трактористсемпе трактористкăсене комбайнерсемпе трактористсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнма, тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра комбайнсемпе тата тракторсемпе усă курнин чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса пама чĕнет.

ССР Союзĕн Наркомземĕ МТС-сен директорĕсене тата вырăнти çĕрĕç органĕсене пурне те комбайнерсемпе трактористсен социализмлă ăмăртăвне пуçарса куллен ертсе пыма, ĕç нормисене ирттерсе тултарассинче ăмăртакансене пулăшса пыма хушать.

Сирĕн шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр-и?

Учительсемпе шкул ачисем вăйĕпе хатĕрленсе çитнĕ

ВĂРМАР. Шăхальри вăтам шкул иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Халĕ вăл çĕнĕ вĕренӳ çулне пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕ. Учительсемпе вĕренекенсен вăйĕпе 320 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. Çĕмĕрĕлнĕ кантăксене лартнă, пукансĕтелсем çĕнĕрен илнĕ, киввисене юсанă. Çавăн пекех доскăсене те юсанă.

Вĕренекенсем валли 2300 кĕнеке хатĕрлесе хунă. Классене çуса тасатнă. Вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитнине комисси тĕрĕслесе актпа йышăннă.

Вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕнчен пуçласах ачасене вĕри апат çитерме шутлатпăр. Çав шутпа 1,10 гектар тулă, 0,70 гектар çĕрулми лартса хăварнă, 0,10 гектар çинче тĕрлĕ пахча-çимĕç тата фронтовиксем валли табак çитĕнет.

Пахча-çимĕçсемпе тырпулсене çумкурăксенчен йĕркеллĕ тасатса тăтăмăр. Шкул участокĕнче вĕрентекенсемпе вĕренекенсем черетпе ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çулта вĕри апат хĕл каçиччепех пулнă, кăçалхи çул вĕри апат пахалăхне татах лайăхлататпăр.

К. ОРЛОВА.

Биологипе вĕрентекен учительница.

* * *

ИШЛЕЙ. Ишекри вăтам шкул (директорĕ Н. Алексеева юлташ) çĕнĕ вĕренӳ çулне пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Унта вĕренӳре кирлĕ кĕнекесемпе хут-карандашсем çителĕклĕ таран хатĕрленĕ, шкул кăмакисене шуратнă, партăсене юсанă. Çавăн пекех учительсен вăйĕпе 75 кубометр вутă хатĕрленĕ.

Шкулăн 3 гектар çинче участок пур. Унта тĕрлĕ пахча-çимĕç лартнă. Вĕренӳ çулĕ пуçлансанах шкул ачисене вĕри апат çитерме тытăнаççĕ. Кунсăр пуçне шкул пахчинче кăçал 5 лав утă çулса илнĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

* * *

ШĂХАСАН. Тури Сурăмри пуçламăш шкул (заведующийĕ Н. Федорова юлташ) хĕрсех çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленет. Шкулти вĕренӳ пособийĕсемпе кĕнекесене тĕплĕн шута илнĕ, вĕсене çитес вĕренӳ çулĕнче усă курма тирпейлĕн хатĕрлесе хунă.

Кăçалхи çул çĕнĕрен вĕренме пыракан ачасене тĕплĕн шута илнĕ, вĕренме пымалли çинчен ачасем хăйсем те тата ашшĕ-амăшĕсем те лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Шкул участокĕнче çĕрулми тата ытти çимĕçсем лартнă, вĕсене тирпейлĕн пухса кĕрес тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлеççĕ. Кунпа пĕрлех фронтовиксен ачисене вĕренме лайăх условисем туса парас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тума тăрăшаççĕ.

Шкул валли хĕл каçмалăх вутă турттарса хатĕрленĕ.

Степан АСЛАН.

ИКĔ СТОЛИЦА ĂМĂРТĂВĔ

Шупашкарти «Кооператор» артель коллективĕ икĕ столица хушшинчи ăмăрту çинчен сӳтсе-явнă хыççăн, хăй çине конкретнăй обязательствăсем илнĕччĕ. Вăл 1943 çулхи производство программине пысăк пахалăхлă продукци парса срокчен пурнăçлама пулнă.

Июль уйăхĕнче артель, иртнĕ уйăхсемпе танлаштарсан, тухăçлăрах ĕçлет. Уйăхри задание паянхи кун тĕлне ытлашшипех пурнăçларĕ. Паллă стахановецсем В. Рыбаков, И. Пластинин, В. Шмелева юлташсем кулленхи ĕç нормине 180—200 процент тултараççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçри опычĕсемпе ытти рабочисене те паллаштараççĕ.

Хĕле хатĕрленес енĕпе 300 кубометр вутă хатĕрленĕ. Рабочисем пурăнакан 18 хваттере юсаса çитернĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕччен хĕле пур енчен те хатĕрленсе çитетпĕр.

И. КОЛБАСОВ,

Артель правленин председателĕ.

Чугунçул работникĕсен уявĕ ячĕпе

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри пĕр цехра ĕçлекен тимĕрçĕ Захаров юлташ чугунçул работникĕсен уявĕ тĕлне задание 300 процент тултарма обязательство илнĕ. Хăйĕн обязательствине вăл чыслăн пурнăçларĕ. Июлĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа паянхи кунччен ĕç нормине 373 процент таран тултарса пычĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн хура металлурги Халăх Комиссариатĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Хура металлурги Халăх Комиссариачĕ тимĕр-тăмăр пухас тата ăна заводсене тиесе ярса парас ĕç 1943 çулхи иккĕмĕш кварталта мĕнле пулса пынине пăхса тухса, Чăваш республикинчи ВЛКСМ организацийĕ кутĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртнă.

Уйри тырпула вӑхӑтра, пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртсе, фашизма хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма пулӑшар!

Кунне ик-виҫшер норма тултараҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлӗн 30-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). Тӗрер ялсоветӗнчи «Пчелкино» колхоз кӑҫалхи ҫул тырпулсене пухса кӗме организованно тухрӗ. Ҫак ответлӑ ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек туса ирттерме колхозниксемпе колхозницӑсем тӗплӗн хатӗрленчӗҫ, хатӗрленӳ ӗҫне нумай вӑй хучӗҫ. Тырӑ ӑвӑса ларсанах бригадӑсемпе звеносем маларах шӑрсе ҫитнӗ участоксене суйласа илсе вырчӗҫ. Малаллахи кунсенче вара ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳссех пычӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫе пӗр ҫын пек хаҫӑс тухса ӗҫ нормисене икшер-виҫшер хут ирттерсе тултарса пыма тытӑнчӗҫ. О. Осипова тырӑ вырса куллен 4-шар ӗҫкунӗ, Макарова, Е. Булкина юлташсем 3-шер ӗҫкунӗ тӑваҫҫӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшре агитаторсем лайӑх ӗҫлени пысӑк вырӑн йышӑнчӗ. Вӗсем агитациллӗ ӗҫе ӗҫпе ҫыхӑнтарса пыраҫҫӗ, ӗҫре хӑйсен нормисене ирттерсе тултараҫҫӗ.

Уборка ӗҫӗсене Именкассинчи «Малалла» колхозра та аван организацилерӗ. Тырра кӗрепленлӗ ҫавасемпе ҫулаҫҫӗ, жнейкӑсем те аван ӗҫлеҫҫӗ. Колхозник Е. Прокопьев ҫавапа ҫулать. Кунне вӑл пӗччен 0,30 гектар тырӑ вырать, талӑкри ӗҫ нормине 150 процент тултарать. Е. Прокопьев юлташ вӗрентсе хӑнӑхтарнипе Крылова, Николаева, Захарова колхозницӑсем те тырра кӗрепленлӗ ҫавапа ҫулма пуҫларӗҫ. Талӑкри нормӑна пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Жнейкӑсемпе ӗҫлекенсем—Леонтьевпа Иванов юлташсем талӑкне 2—3-шер норма тӑваҫҫӗ.

Анчах та Именкассинчи колхозра уборка ӗҫне хутшӑнман кахалсем те пур. Е. Васильева, Романова, М. Михайлова, А. Егорова колхозницӑсем ӗҫлеме тултараҫҫӗ пулсан та, кахалланса лараҫҫӗ, ӗҫе тухмаҫҫӗ.

С. ШАДИН.

Тӑван ҫӗршыв интересне ҫӳлте тытса

ТАВАЙ, июлӗн 30-мӗшӗ. (Телефонпа). Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе тырса, районри колхозсем тырпулсене вӑхӑтра пухса кӗртессишӗн кӗрешеҫҫӗ. «Новый путь», Мичурин ячӗпе тӑракан, «8-ое марта» колхозсем кӗрхи тырӑсене 5—6 ӗҫкунӗ хушшинче вырса пӗтерчӗҫ.

Ырашӑ пур колхозсем те массӑллӑн вырма пуҫлани 2—3 кун иртрӗ. Нумай колхозсем уборка ӗҫӗсен хӑвӑртлӑхне ҫӳле ҫӗклерӗҫ. Паянхи куна район пурӗ кӗрхи тырӑсен 48 процентне вырса пухрӗ. Чылай колхозсем аван сапма ыран-паянах тытӑнма хатӗр. Ҫанталӑк йӗпе тӑни кӗлте турттарма кансӗрлерӗ, аван ҫапма чӑрмантарчӗ. Анчах ҫапах та малта пыракан «Искра Ильича», «Горьковская Коммуна» колхозсем, витнӗ итемсемпе усӑ курса, тырӑ вырма тухнӑ хыҫҫӑн виҫҫӗмӗш кунӗнчех аван ҫапма пуҫларӗҫ, пурӗ 30 гектар тыррине ҫапса илнӗ те ӗнтӗ.

Июлӗн 28-мӗшӗнче колхозсем государствӑна 1943 ҫулхи тырӑ пама хӗрлӗ обозсем организацилерӗҫ. Ҫак кун Заготзерно пунктне пурӗ 143 центнер та 68 килограмм тырӑ леҫнӗ.

Уборка ӗҫӗсен хӑвӑртлӑхне татах ӳстерес пулать. Хӗрӳ ӗҫ вӑхӑтӗнче кашни ҫынна хӑйне ответлӑрах тыттармалла. Куллен тимлӗн ӗҫлемелле. Ҫапла ӗҫлесен ҫеҫ пирӗн район, пирӗн колхозсем уборка ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлӗҫ. Машинӑсене пурне те ӗҫе ямалла. Эпир халӗ жнейкӑсемпе 425 гектар ҫеҫ вырнӑ, 47 гектар ҫинчи тырра ҫеҫ капансене хывнӑ. Ҫакӑ вӑл пачах ҫитеймест.

А. САЛМИН,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Куславкка районӗнче СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн постановленине пӑсаҫҫӗ

Малта пыракан 12 колхоз государствӑна тырӑ пама тытӑннӑ. Июлӗн 29-мӗшӗнче «Правда» колхоз хатӗрлев пунктне 12 лаша тырӑ леҫрӗ. Ҫавӑн пекех «Канаш», «Путь Ленина», Жданов ячӗпе тӑракан колхозсем те государствӑна тырӑ памалли пилӗккунлӑх графикне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Анчах районри нумай колхозсем, темиҫе кун хушши аван ҫапаҫҫӗ пулин те, государствӑна тырӑ пама тытӑнман. «Красноармеец» колхозпа «Динамо» колхоз председателӗсем «государствӑна тырӑ пама аван ҫапса пӗтерсен те ӗлкӗрӗпӗр-ха» тесе пурӑнаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех «Коммунар» «Первая пятилетка» колхозсем те государствӑпа тырӑ памасӑрах ҫӗнӗ тырра аванс шучӗпе салатса пама пуҫланӑ. Вӗсем СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «1943 ҫулхи тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине пӑснӑ. «Коммунар» колхоз государствӑна обязательнӑй йӗркепе тырӑ пӗр пӗрчӗ те паман, ҫав вӑхӑтрах аванс шучӗпе 3,5 центнер валеҫсе панӑ.

Ҫавӑн пекех «Первая пятилетка», «Спартак» колхозсем те партипе правительствӑн постановленине пӑсаҫҫӗ.

«13 лет Октября» колхоз ыран ыраш вырса пӗтерет. Колхозӑн ҫапса хунӑ тырӑ та пур, анчах хатӗрлев пунктне пӗр килограмм та леҫмен-ха.

Государствӑна тырӑ парса татасси—колхозсемпе колхозниксен государство умӗнчи чыслӑ тивӗҫлӗхӗ пулса тӑрать. Государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе колхозсене пилӗккунлӑ задани сем ҫирӗплетсе панӑ. Вӑл заданисене кашни колхозӑн пӗр пӑркаланмасӑр, вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртсе пымалла. Колхозниксене аванс памалли йӗркене пӑсмалла мар.

И. ШАРКОВ.

КУСЛАВККА, июлӗн 30-мӗшӗ. (Телефонпа).

Кунта тӑкаксемпе кӗрешмеҫҫӗ

СОВЕТСКОЕ, июлӗн 30-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри хӑшпӗр колхозсенче тырра тӑккаласа выраҫҫӗ, тӑккаланчӑксене ҫийӗнчех пуҫтарса пымаҫҫӗ.

Кӑчкассинчи «Машина» колхозӑн пӗррӗмӗш бригади (бригадирӗ М. Макарова) кашни тӑваткал метр ҫине 22 пучах тӑкса хӑварать. Ку вӑл пӗр гектар ҫине 22 килограмм тырӑ тӑкса хӑварни, кашни ӗҫкунӗ ҫине 335 грамм тивес тырра ҫухатни пулать. Е. Данилова колхозница пуринчен ытларах тӑккалать, ҫапах та ӑна бригадир пӗрре те асӑрхаттарман. Ҫавӑн пекех Ҫухрари «Коминтерн» колхозра та тӑкакпа пачах кӗрешмеҫҫӗ. Пӗррӗмӗш бригадӑра пӗр тӑваткал метр ҫине 19 пучах вырӑнса юлать.

Ҫанталӑк ҫӑмӑрлӑ тӑчӗ. Вырнӑ тырра ҫийӗнчех ҫӗмеле хывмалла. Анчах Сталин ячӗпе тӑракан колхозра вырнӑ тырра ҫӗмеле хывмасӑр 3 кун выртарнӑ, кӗлтери тырӑ шӑтса кайнӑ. Ҫухрари «Коминтерн», Володарский ячӗпе тӑракан, Лапракассинчи «Сталинград» колхозсенче тырӑ ҫӗмелте хӗрсе пӑсӑлнӑ.

Тӑкаксем ан пулччӑр тесен, шкул ачисене пучах пуҫтарас ӗҫе явӑҫтармалла. Анчах ҫакӑ халӗ нихӑш колхозра та ҫук.

Уборка ӗҫӗсен хӑвӑртлӑхӗ начар пырать. Жнейкӑсемпе тата кӗрепленлӗ ҫавасемпе пӗр колхозра та кирлӗ таран усӑ курмаҫҫӗ. Ҫавна пула районри колхозсем халӗ уйри тырпулӑн 25 процентне ҫеҫ вырнӑ. Вӑрманкассинчи Энгельс ячӗпе тӑракан, Турикассинчи «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхозсем «халӗ тырӑ симӗс-ха» тесе ларса тырра тӑкӑнас патне ҫитерчӗ.

Ӗҫ дисциплини чылай колхозсенче начар. Ҫухрари «Коминтерн» колхозра июлӗн 28-мӗшӗнче ӗҫе 32 ҫын тухас вырӑнне 18 ҫын ҫеҫ тухнӑ. Правлени аппаратӗнче, ревкомиссире, пушар дружининче, фермӑсенче ӗҫлекенсем те тырӑ вырма тултараҫҫӗ. Анчах вӗсем урам тӑрӑх калла-малла уткаласа ҫеҫ ҫӳреҫҫӗ.

Я. СИГАЙ, Ф. КОВИКОВ.

Машиновед Салихов юлташ жнейкӑпа талӑкра 9 гектар вырать

ЧКАЛОВСКОЕ, июлӗн 30-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри «Красный Октябрь», «Канаш», Киров, Нариман ячӗсемпе тӑракан тата «Кзыл-Тан», «Ырлӑх» колхозсем ыраш вырса пӗтерчӗҫ. Ку колхозсем кӗрхи тырӑсене машинӑсемпе ӑнӑҫлӑн вырса, кӗске срокра пӗр тӑккаламасӑр пухса илчӗҫ.

Нариман ячӗпе тӑракан колхозӑн машиновечӗ Салихов юлташ пӗр жнейкӑпа пӗччен куллен 9-шар гектар тарам тырӑ вырчӗ. Мӗнле ӗҫлет-ха вӑл? Колхоз правленийӗ Салихов юлташа ӗҫлеме 4 лаша уйӑрса панӑ. Вӗсене вӑл хӑй ӗҫленӗ уйра тытса кашни икӗ-виҫӗ сехетре улӑштарса кӳлсе ӗҫлет. Ҫапла Салихов юлташ тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах хире тухса, мӗн тӗттӗм пуличчепех жнейкӑпа пӗр чарӑнмасӑр тырӑ вырать. Ӗҫӗ те тухӑҫлӑ, лашасем те ывӑнмаҫҫӗ. Нормӑпа унӑн 4 гектар вырмалла, Салихов юлташ куллене х 9 гектар вырнӑ. Ҫавӑн пекех Киров ячӗпе тӑракан колхозра та В. Козлов, И. Кириллов, Виноградов машинистсем жнейкӑсемпе 6 — 7-шер гектар тырӑ вырнӑ.

В. КУЗЬМИН.

ВЛКСМ Калинино райкомӗ силос хывас ӗҫпе интересленмест

Комсомол райкомӗн секретарӗн сӗтелӗ ҫийӗнче районри комсомолецсен вӑйӗпе 1.258 тонна силос хывни ҫинчен пухнӑ сведени выртать. Унта Ермошкӑри Калинин ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем 100 тонна, Алгазинӑри «Чӑваш Коммуни» колхозри комсомолецсем 85 тонна, Услапари «Броневик» колхозри комсомолецсем 65 тонна хывнӑ, тесе ҫырса хунӑ.

Райҫӗрӗҫ пайне кӗретӗн те—заведующи сӗтелӗ ҫийӗнче каллех районри колхозсем 1.258 тонна силос хывнӑ текен сведение куратӑн. Вӑл шутран: Ермошкӑри Калинин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем 100 тонна, Алгазинӑри «Чӑваш Коммуни» колхоз членӗсем 85 тонна, Услапари «Броневик» колхоз членӗсем 65 тонна хывнӑ, тесе ҫырса хунӑ.

— ВЛКСМ райкомӗнче 1.258 тонна силоса комсомолецсен вӑйӗпе хывнӑ тесе шантарчӗҫ, колхозниксем хывни ӑҫта?—тесе ыйтрӑмӑр райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗнчен Скворцов юлташран.

— Ӗҫ пачах урӑхла. Силоса колхозниксем хывнӑ, комсомолецсем мар. Райкомол секретарӗ вӑл сведенисене пирӗнтен илчӗ,—тесе ответлерӗ Скворцов юлташ, кӑмӑлсӑр пулса.

Ӗҫе тӗплӗнрех пӗлес тесе, эпир каллех райкомол секретарӗ Степанова юлташ патне пытӑмӑр.

— Силос хывас ӗҫе миҫе комсомолец хутшӑннӑ?—тесе ыйтрӑмӑр.

— Миҫе хутшӑнни паллӑ мар-ха, — ответлет Степанова юлташ.

Степанова юлташ Шӗнерти «1-ое Мая» колхозра комсомолецсем 95 тонна силос хывнӑ, тесе шантарать. Тӳррипе илсен, кунта пӗтӗмпе те пӗр комсомолец кӑна ӗҫленӗ. Ермошкӑри Калинин ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем силос хывас тӗлӗшпе пачах ӗҫлемен.

Степанова юлташ пачах йӑпӑш ҫул ҫине тӑпӑ. Капла туни комсомолецсене ӗҫе мобилизацилеме пулӑшмасть, вӗсене ӗҫрен пӑрӑнма вӗрентет.

Е. ВОРОБЬЕВ, В. ЗАЙЦЕВ.

Республикӑри районсем ҫулйӗр уйӑхлӑхӗнче мӗнле ӗҫлерӗҫ

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ, республикӑри ҫулйӗр уйӑхлӑхӗн итогӗсене пӑхса тухса, ҫак районсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ: Етӗрне районӗ плана срокчен 105,7 процент, Калинино районӗ задание 65,3 процент ирттерсе тултарнӑ, Шӑхасан районӗ ҫӗр ӗҫне 131,6 процент, чул хатӗрлес плана 87 процент, Елчӗк районӗ ҫӗр ӗҫӗн планне 112 процент, чул турттарас плана 118 процент, Ҫӗмӗрле районӗ ҫула якатса хытарас плана 115 процент, ҫӗр ӗҫӗн планне те чылай ирттерсе тултарнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ Етӗрне районне Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата пӗррӗмӗш премине памалла тунӑ. Ҫулйӗр ӗҫӗнче уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫленӗ колхозниксемпе колхозницӑсене премилеме 12 пин тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ.

Укҫан ҫак районсене премилемелле тунӑ: Елчӗк—10 пин тенкӗ, Калинино—8 пин тенкӗ, Ҫӗмӗрле—8 пин тенкӗ, Шӑхасан—6 пин тенкӗ.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомӗ ҫулйӗр ӗҫӗнче Ҫӗрпӳ, Сӗнтӗрвӑрри, Шупашкар районӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Кунсӑр пуҫне, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ ку ӗҫре Советски, Красноармейски, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Октябрьски тата Куйбышев районӗсем начар ӗҫленине палӑртнӑ. Асӑннӑ районсенчи райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсене ҫулйӗр ӗҫӗн планне уборка ӗҫӗ хыҫҫӑн пурнӑҫлама хушса хӑварнӑ.

МОПР членӗсем аманнӑ боецсене ҫапӑҫу хирне хӑвӑртрах таврӑнма пулӑшаҫҫӗ

МОПР организацийӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче госпитальсене шефа илсе, вӗсене нумай пулӑшу параҫҫӗ.

Чӑваш республикинчи МОПР организацийӗсем виҫӗ госпитале шефа илнӗ. Вӗсем шефа илнӗ госпитальсене парнесем пама 40.000 тенкӗ ытла укҫа пухнӑ. Ку пулӑшусӑр пуҫне МОПР-ӑн пуҫламӗш организацийӗсем нумайӗшӗсем уйрӑм палатӑсене шефа илнӗ. Ҫавӑн пек ячейкӑсенчен чи лайӑх ӗҫлекенни Шупашкар хулинчи Ленинградская урамри Смирнова юлташ ертсе пыракан ячейка пулса тӑрать. Вӗсем боецсем валли кӗпе-йӗм тирсем ҫӗлесе, саплаcа парас, аманнӑ боецсемпе калаҫусем ирттерес енӗпе пысӑк ӗҫсем турӗ. Ҫакӑншӑн Смирнова юлташа кӑҫал «Активист МОПР-а СССР» значокӗ панӑ. Кунсӑр пуҫне госпиталь администрацийӗпе аманнӑ боецсем МОПР ячейкине тата МОПР Обкомне темиҫе хутчен те тав турӗ.

Г. ПЛАТОНОВ.

Редакцине килнӗ ҫыру

Редактор юлташ!

Ӑшӑ чӗререн пӗтӗм кӑмӑлпа ыйтатӑп: Красноармейски районри «Красное Сормово» колхоз председательне Терентий Осипович Осипова тата ҫав колхозри колхозниксене пирӗн чӑсри боецсем тата эпӗ хам пӗтӗм чӗререн тав тунине хӑвӑр хаҫат урлӑ пӗлтерсемӗрччӗ. Ҫав колхоз Ленинград патӗнчен эвакуацийӗркипе куҫса пынӑ пирӗн ҫемьесене пурӑнма лайӑх условисем туса панӑ. Пирӗн ҫемьесемшӗн ҫакӑн пек тӑрӑшни ҫине ответлесе, эпир тӑшмана вунӑ хут вӑйланрах пырса ҫапса ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартма тупа тӑватпӑр.

Чӑсри красноармеецсем хушшипе
М. ИВАНОВ.

Агитаторсем пурте хирте

(Хамӑр корреспондентран)

Вырӑс Сурӑмӗнчи «Доброволец» колхоз уборкӑна тӗплӗн хатӗрленсе тухрӗ. Тырӑ вырма тухиччен вӑл утӑ ҫулса пуҫтарчӗ, государствӑна утӑ парса таттарӗ, силос хывса хӑварчӗ.

Июлӗн 19-мӗшӗнче колхоз уйрӑм участоксене суйласа ыраш вырма тухрӗ. Халӗ хирте хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Колхозниксемпе колхозницӑсем мӗнпур вӑя хурса тырпула пӗр тӑккаламасӑр, вӑхӑтра пухса кӗртессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Вӗсем хушшинче ӑмӑрту анлӑн сарӑлнӑ.

Колхозниксен ӗҫри хастарлӑхӗ ҫавӑн пек пысӑк пулни колхозниксем хушшинче агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх организациленинчен килет. Ку колхозра 20 агитатор. Вӗсем куллен бригадӑсенче калаҫусем ирттереҫҫӗ, хаҫатсем вуласа параҫҫӗ тата ытти массӑллӑ ӗҫсем туса ирттереҫҫӗ.

Агитаци ӗҫӗнче вӗсем ҫураки вӑхӑтӗнчи опытне тулли усӑ кураҫҫӗ. Кашни агитатор хӑйне ҫирӗплетсе панӑ участокра мӗнпур ӗҫе лайӑх туса пырасси шӗн, ҫапла майпа ӑмӑртура бригадӑна малти вырӑна кӑларассишӗн тӑрӑшать.

Пӗррӗмӗш бригадӑра виҫӗ агитатор: комсомолка Маргарита Карташова, Елена Соснина тата Иван Кошкин. Вӗсем кашни кунах хӑйсен звенисенче колхозниксене хаҫат вуласа параҫҫӗ, кӗске калаҫусем ирттереҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне кунта ӗҫ хыҫҫӑн кашни кунхи итогсене тӑвасси йӑлана кӗнӗ. Бригада хӑйне панӑ нарядсене мӗнле пурнӑҫларӗ, уйрӑм колхозниксем мӗнле ӗҫлеҫҫӗ? Ҫакӑн ҫинчен сӳтсе-яваҫҫӗ ӗҫ хыҫҫӑн, ҫавӑнтах вара ыран епле ӗҫлемелли ҫинчен калаҫса татӑлаҫҫӗ.

Ахальтен мар ӗнтӗ пӗррӗмӗш бригада ҫураки вӑхӑтӗнче те мала тухрӗ, халӗ те малта пырать. Колхозниксем пурте ӗҫе ир-ирех организованно тухаҫҫӗ, тухӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

ВКП(б) членӗн кандидачӗ Александр Булатов, комсомолка Вера Бочкова тата Василий Соколовпа Николай Морозов юлташсем иккӗмӗш бригадӑри агитаторсем. Вӗсем те бригадӑри колхозниксем хушшинче ӑмӑртӑва лайӑх организациленӗ, ӗҫ дисциплинине ҫирӗп. Колхозниксем ирхи апата лараҫҫӗ-и, е кӑнтӑрлахи кану вӑхӑчӗ-и,—агитаторсем калаҫу ирттерме тытӑнаҫҫӗ. Калаҫу мӗнпурӗ те 10—15 минутӑна ҫеҫ тӑсӑлать. Ҫав вӑхӑт хушшинче вӗсем колхозниксене Совет Информаци Бюровӗн оперативнӑй сводкине, ютҫӗршывсенчи ҫӗнӗ хыпарсемпе паллаштараҫҫӗ.

Улттӑмӗш бригадӑри агитаторсем те хӑйсене шанса панӑ ӗҫе тивӗҫлӗн туса пыраҫҫӗ. Вӗсем ыраш вырма тухнӑранпа куллене х хаҫатсем ҫинчи статьясене, Совет Информаци Бюровӗн оперативнӑй сводкине вуласа панисӗр пуҫне; уйрӑм темӑсем тӑрӑх 3 калаҫу туса ирттернӗ. Коммунист Морозова «Отечественнӑй вӑрҫӑн икӗ ҫулхи итогӗсем» тата «Чӑваш халӑхӗн геройӗсем» темӑпа докладсем туса пачӗ. Вӑлах «Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем тата вӗсемпе пӗр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайӗн территорийӗ ҫинче вӗсене вӑхӑтлӑха оккупациленӗ тапхӑрта тунӑ тискер ӗҫсем пирки пулнӑ суд процесӗ ҫинчен» доклад тума хатӗрленет.

«Доброволец» колхозри агитаторсене пуҫламӗш парторганизаци (секретарӗ А. Морозова юлташ) пысӑк пулӑшу парать. Вӑл тӑтӑшах вӗсене пухса кӑтартусем парать. Тырӑ вырма тухиччен агитаторсемпе вулавҫӑсен канашлӑвне ирттернӗ, унта хаҫатсемпе епле усӑ курасси, мӗнле темӑсем тӑрӑх калаҫусем, докладсем ирттересси ҫинчен сӳтсе-явнӑ.

Парторганизаци тӑрӑшнипе колхозра малта пыракан бригадӑна пама куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялав тунӑ, кӑтарту хӑмисем организациленӗ, стена хаҫачӗ вӑхӑтра тухса тӑрать.

Ҫакна та палӑртмалла: кунта Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсене телефон тӑрӑх илессине лайӑх организациленӗ. Вӗсене темиҫешер экземпляр ҫырса бригадӑсене салатаҫҫӗ тата колхозпа ялсовет канцелярийӗ умӗнче хӑмасем ҫине ҫыпӑҫтараҫҫӗ.

«Доброволец» колхозӑн кӑҫал 650 гектар ҫинчи тырра пуҫтармалла. Халӗ уйра ӗҫлеме вӑтӑ-и вӑл, е ытла та ҫамрӑк-и,—пурте пысӑк хаваслӑхпа тухаҫҫӗ. Яла ҫын юлмапа пӗрех, пурте хирте, тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте.

Колхозниксене тӑрӑшса ӗҫлеме условисем туса панӑ: тырӑ вырма тухиччене х колхозра ачасен ясли уҫнӑ, обществӑллӑ столовӑй ӗҫлет.

Фронтран килекен хыпарсем колхозниксене татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ. Вӗсем, фронтовиксенчен юлас мар тесе, мӗнпур вӑя тырпула хӑвӑртрах пухса кӗртнӗ ҫӗре параҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

Элӗк районӗ.

Шывра ишме вӗрентекенсен семинарӗ

Физкультурӑпа спорт ӗҫӗсен республикӑри комитечӗ шывра ишме вӗрентес ӗҫӗн обществӑллӑ инструкторӗсене хатӗрлес тӗлӗшпе Шупашкарта семинар ирттерчӗ. Семинарта 50 ҫын пулчӗ. Вӗсем 40 сехетлӗ программӑна вӗренсе пӗтерсе, районсене ӗҫлеме саланчӗҫ.

Ют ҫӗршывсенче

Черчилль общинӑсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, июлӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Черчилль общинӑсен палатинче сӑмах тухса каланӑ. «Муссолини Итали халӑхне нумай вӑхӑт хушши хытӑ асаплантарса тӑни пӗтрӗ. Ҫакӑ вӑл,—тенӗ Черчилль,—Итали пурнӑҫӗн паллӑ тапхӑрӗ вӗҫленсе ҫитнине пӗлтерет. Фашистла ҫуртйӗрӗн никӗсӗ ишӗлчӗ. Малалла мӗн пуласси ҫинчен малтанах пӗлсе калама хӑтланмасӑрах, ҫакна ҫирӗппӗн калама пулать: фашистсен ҫуртйӗрӗ пӗтӗмӗшпех ишӗлсе анмалла, тен вӑл ишӗлсе аннӑ та пулӗ ӗнтӗ»,—тенӗ Черчилль.

Черчилль каланӑ тӑрӑх, Италире питӗ пысӑк улшӑнусем пулмалла, анчах вӑл улшӑнусем мӗн майлӑ пулса пырассине пӗлсе калама ир-ха.

Муссолини тунӑ преступленисем тата вӑл ӑссӑр пулни Итали халӑхне хакла ларнине паллӑ туса, Черчилль малалла ҫапла каланӑ:

«Нимӗҫсем пуҫ пулса тӑрассинчен хӑтӑлассипе Итали халӑхӗн тӗп ӗмӗчӗ пулса тӑрать. Эпӗ ку тӗлӗшпе пӗрре те иккӗленместӗп. Итали халӑхӗ улшӑн ним тӗлсӗр пыракан кӗрешӗве пӗтерсе лартса хӑйӗн ӗлӗк пулнӑ демократиллӗ тата парламентлӑ режимне ҫӗнӗрен чӗртсе ярасси ҫинчен шухӑшлать. Ҫак ӗҫе Итали халӑхӗ пурнӑҫа кӗртме пултарать. Анчах чӑннипех ҫапла пултӑр тесен, унӑн малалла кампа пӗрле каяссине халех суйласа илмелле».

«Итали правительствипе Итали халӑхӗ хӑйсене нимӗҫсемпе пӗрле каймалла тесе шутлаҫҫӗ пулсан, — тенӗ малалла Черчилль,—пирӗн ун чухне пӗр май кӑна тӑрса юлать, вӑл май—Италие хирӗҫ вӑйлӑн вӑрҫасси. Эпир Италие пур енчен те пыра-пыра ҫапма пуҫлӑпӑр: ҫурҫӗртен те, кӑнтӑртан та, тинӗсрен те, сывлӑшран та тата десантсем антарса та. Эпир Италие хирӗҫ пыракан вӑрҫа тата ытларах, мӗн май пур таран вӑйлатса яма тӑрӑшӑпӑр. Ку тӗлӗшпе союзниксен ҫарӗн руководителӗсене кама тивӗҫлӗ, ҫавсене пурне те кирлӗ кӑтартусем панӑ ӗнтӗ».

Италин ҫӗнӗ правительстви ҫинчен асӑннӑ май, Черчилль ҫапла каланӑ: ку правительствӑн питӗ пысӑк решенисем йышӑнма тивет, тенӗ.

«Ку таранччен,—тенӗ малалла Черчилль,—Итали правительстви пирӗнпе калаҫасси ҫинчен сӑмах хускатса иккен-ха. Ҫавӑнпа та пирӗн урӑх решенисем йышӑнмалли ҫук. Пирӗн пӗрре йышӑннӑ решенисемех вырӑнлӑ юлаҫҫӗ. Вӑл решенисем—Италин пӗтӗм территорийӗнчи ҫар объекчӗсем ҫине нумайрах та нумайрах вутпа хурҫӑ тӑкасси. Апла пулин те эпӗ ҫакна асӑрхаттарасшӑн. Эпир Италире мӗн пуласшине пӗлместпӗр. Ҫавӑнпа халӗ, Муссолини кайнӑ хыҫҫӑн, фашистсен влаҫӗ тӳрленмелле мар хуҫӑлса аннӑ хыҫҫӑн, Итали халӑхӗпе пӗрле калаҫса татӑлма шанчӑк паракан кирек мӗнле майсене те хамӑр умран сирсе яма хӑтланни ухмахла ӗҫ туни пулӗччӗ»,—тенӗ Черчилль.

Черчилль малалла ҫапла каланӑ: Италишӗн хӑйшӗн те тата союзниксемшӗн те Итали пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн мар, пӗтӗмӗшпех пӗр харӑс, ним сӑмахсӑр парӑнни вырӑнлӑ пулмалла. Британи правительстви ку тӗлӗшпе Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе тачӑн килӗшсе тӑрать, тенӗ Черчилль.

«Итали Германин вӑй-хӑватӗнче вунӑ пайран пӗр пайне йышӑнса тӑрать, тӗрӗсрех каласан, йышӑнса тӑнӑ,—тенӗ малалла Черчилль—Гитлерла Германие пур енчен те хаярран тапӑнаҫҫӗ. Вырӑссен фронтӗнче Великобританипе Пӗрлешӳллӗ Штатсем тин ҫӗр ҫинче ку таранччен тунӑ кирек мӗнле операцирен те нумай пысӑкрах хӑватлӑ ҫапӑҫусем пулса иртрӗҫ. Июль уйӑхӗнче ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен ҫарне питӗ йывӑр сурансем кӳнӗ. Нимӗҫ хулисем ҫине тӗп тӑвакан бомбӑсем тӑкасси ӳсӗмӗн ӳссе, вӑйланса пырать. Оккупациленӗ ҫӗршывсенче захватчиксене хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫас шухӑш-кӑмӑлсем ҫӗкленмӗҫемӗн ҫӗкленсе пыраҫҫӗ».

Унтан Черчилль ҫакна палӑртнӑ: вырӑссен фронтӗнче пулса иртнӗ виҫӗ кампанире нимӗҫсен ҫарӗсене самаях лӳчӗркенӗ пулин те, вӑл ҫарсем ҫаплах пӗтмен-ха, вӗсене ура ҫине тӑрайми пуличчен ҫапса хуҫман-ха.

«Халлӗхе,—тенӗ Черчилль,—нацистсен вӑрҫӑ машини Европӑна йывӑр чир пек пусса тӑрать. Эпир ҫав хӑрушӑ чир-чӗре пӗтӗмӗшпех пӗтерсе лартма шут тытрӑмӑр. Италие пырса тивекен ыйтӑва татса панӑ чух яланах ҫав тӗп задачӑна асра тытса тӑрас пулать»,—тенӗ Черчилль.

Италири лару-тӑру

Итальянецсен фашизма хирӗҫле 5 партин манифесчӗ

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Туринра тухса тӑракан «Стампа» ятлӑ хаҫат итальянецсен политикӑллӑ 5 парти пӗрле йышӑннӑ манифеста пичетлесе кӑларнӑ. Манифеста ҫак партисем йышӑннӑ: национальнӑй парти, христиан-демократсен партийӗ, коммунистсен партийӗ, либераллӑ реконструкционистсен партийӗ тата социалистсен партийӗ. Манифест Муссолинине тата фашистсен партин ытти пуҫлӑхӗсене те ҫирӗппӗн айӑплама ыйтать. «Пирӗн политикӑллӑ пурнӑҫа 20 ҫул хушши хӗссе тӑнӑ йывӑр пуслӑх хуҫӑлса таталчӗ,—тенӗ манифестра.— Ҫав вӑхӑт хушшинче ирӗк илнӗ усал туйӑмсем халӑхӑн тем пек вӑйлӑ пурлӑхне ҫаратса аркатса ячӗҫ, ҫынӑн пуҫӗнчи шухӑшсене сӑнчӑрласа лартрӗҫ, пусмӑрпа ирсӗрлӗх йӗркине пуҫласа ячӗҫ. Ҫав йӗрке Итали халӑхӗн ирӗкне тантаса Италие вӑрҫа кӗртсе ячӗ, пӗтӗм Италие пӗтсе ларасси патне кӑларса тӑратрӗ».

Миланра тухса тӑракан «Корьере Делла Сера» ятлӑ хаҫат ҫапла ҫырать: «июлӗн 25-мӗшӗнче хаҫат ҫурчӗ умӗнче пулнӑ демонстрацири халӑх хаҫата политика тӗлӗшпе тытса хупнӑ ҫыхсене халех ирӗке кӑларма ыйтма хушрӗ. Иртнӗ каҫ Миланра никам та ҫывӑрман. Халӑх хаваслӑхӗ ытла та тӗлӗнмелле питӗ вӑйлӑн ҫӗкленсе кайрӗ».

Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, халлӗхе паллӑ мар-ха: пичет ирӗклӗхӗ тата Италире политикӑна хутшӑнса ӗҫлесси ҫӗнӗ правительствӑн политикине килӗшет-и, е ҫӗнӗ правительство ку таранччен ҫӗршыври лару-тӑрӑва хӑй аллине ярса илме пултараймасть-и.

Фашизма хирӗҫле пысӑк демонстрацисем

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви ҫапла пӗлтерет: кунта ҫитнӗ хыпарсем тӑрӑх, Милан хулинчи предприятисенче пур рабочисем те ӗҫлеме пӑрахнӑ. Ҫавӑн пекех Неаполь, Бари, Таранто, Триест, Венеци хулисенче тата ытти хуласенче те фашизма хирӗҫле пысӑк демонстрацисем пулса иртнӗ.

ЛОНДОН, июлӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). АФИ агентстви ҫапла пӗлтерет: Милан хулинче пулса иртнӗ хумханусенче 100 ҫынна яхӑн вӗлернӗ тата амантнӑ.

ЖЕНЕВА, июлӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Швейцарири радио ҫапла пӗлтерет: Милан хулинче фашизма хирӗҫле демонстрацисем пулса пыраҫҫӗ. «Обществӑллӑ пурнӑҫ лӑпкӑ тӑрассине хӑратакан сехетсем иртсе пуҫсан», войскӑсене демонстраци тӑвакан халӑх ҫине пеме приказ панӑ. Хулара пур банксене те хупнӑ. Фабрикӑсенчи рабочисене ӗҫ укҫи памаҫҫӗ.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). «Нью-Йорк Таймс» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Ҫурҫӗр Италири промышленноҫлӑ районсенче фашистсене тапӑнма пуҫланӑ. Милан хулинче фашистсен вырӑнти организацин секретарьне, виҫӗ фашиста йывӑр амантнӑ. Войскӑсем демонстрантсен ушкӑнӗ ҫине автоматсемпе пенӗ, 2 ҫынна амантнӑ. Хулари лару-тӑру хӗрсе ҫитнӗ. Июлӗн 25-мӗшӗнче пулса иртнӗ демонстраци вӑхӑтӗнче нимӗҫ зенитчикӗсем демонстрантсем ҫине тупӑпа пенӗ, 18 ҫынна вӗлернӗ. Халӗ нимӗҫ захватчикӗсене, «халӑхпа тытӑҫни ан пултӑр» тесе, хуларан кӑларнӑ. Нимӗҫ казармисене итальянецсен войскисем сыхласа тӑраҫҫӗ.

Сицилири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, июлӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, халӗ Сицили утравӗн утӑ пайӗнчен ытларах пайӗ союзниксен аллинче. Тӑшман американецсен войскисен колоннисене хирӗҫ вӑйлӑ контратака тунӑ, анчах американецсем вӑл атакӑна сирсе янӑ.

Сицилире союзниксем юлашки вӑхӑтра тата 9 хула тытса илнӗ.

Алжирти радио пӗлтернӗ тӑрӑх, тӑшман Катанири складсемпе ҫар сооруженийӗсене сирпӗнтере-сирпӗнтере аркатать.

Итальянецсен икӗ дивизийӗ хӑйсен позицийӗсене пӑрахса Мессина хулине кӗмелле кӗпер умӗнчи ҫирӗплетнӗ вырӑн патнелле тарнӑ.

Халӗ Канада войскисем кӗрешекен участокра хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Тӑшман йывӑр ҫухатусем тӳсет. Утравӑн ҫурҫӗр пайӗнче американецсен 7-мӗш армийӗ малалла куҫса пырать.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧӐВАШПОТРЕБСОЮЗӐН УЧКОМБИНАЧӖ
сельпо бухгалтерӗсене хатӗрлекен курса вӗренме илесси ҫинчен пӗлтерет.

Заявленисене илме пуҫланӑ, августӑн 20-мӗшӗччен илеҫҫӗ. Вӗрентме августӑн 25-мӗшӗнче пуҫлаҫҫӗ.

Курса арҫынсене те, хӗрарӑмсене те илеҫҫӗ. Вӗренӳ тӗлӗшӗнчен туллимар вӑтам шкултан (7 класс) вӗренсе тухнисене, шут ӗҫӗпе 6 уйӑхран кая мар ӗҫленисене илеҫҫӗ.

Курса вӗренме илнисене пурне те стипенди параҫҫӗ. Столовӑй пур, хваттер те пурне те параҫҫӗ.

Заявленипе пӗрле райпотребсоюз панӑ командировочнӑй удостоверение тата шут ӗҫӗпе мӗн вӑхӑт хушши ӗҫленине пӗлтерекен справкӑна памалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, парти пурнӑҫ пайӗн—3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 755 Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.